ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТЕРРИТОРИЙЁНЧЕ ВЫРНАÇНĂ НУМАЙ ХВАТТЕРЛЕ ÇУРТСЕНЧИ ПЁРЛЕХИ ПУРЛĂХА ТЁПРЕН ЮСАС ЁÇЕ ЙЁРКЕЛЕС ЕНЁПЕ ПРАВĂН УЙРĂМ ХУТШĂНĂВЁСЕНЕ ЙЁРКЕЛЕССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин территорийёнче вырнаçнă нумай хваттерлĕ çуртсенчи пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсас ĕçе йĕркелес енĕпе правăн уйрăм хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен" 2013 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 41 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; 2014, 3 №; 2015, 2, 12 №-сем; 2016, 6, 11 №-сем; 2017, 5, 9 №-сем; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000757 №; "Республика" хаçат, 2023, чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2024, çу уйăхĕн 3-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 3 статьяра:

а) 7^1-мĕш пайра "ăна çĕнетнĕ чухне" сăмахсене "унта улшăнусем кĕртнĕ чухне" сăмахсемпе улăштарас, "тăватă çул та вун пĕр уйăх" сăмахсене "пĕр çул" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 7^2-мĕш пайра "тăватă çул та вун пĕр уйăх" сăмахсене "пĕр çул" сăмахсемпе улăштарас;

2) 6 статьян 1-мĕш пайĕнче "копийĕсемпе пĕрле" сăмахсене ", унта патшалăхăн пурăнмалли çурт-йĕр асăрхавĕн органне Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕн 46 статйин 1-мĕш тата 1^1-мĕш пайĕсемпе палăртнă йĕркепе чăн документа ярса пани çинчен пĕлтерекен сведенисене палăртса хăвармалла" сăмахсемпе улăштарас;

3) 10 статьяра:

а) ятне çакăн пек çырса хурас:

"10 статья. **Нумай хваттерлĕ çуртсенчи пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсас енĕпе республика программине туса хатĕрлемелли тата çирĕплетмелли, унта улшăнусем кĕртмелли йĕрке тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тата тĕп юсав фондне ятарлă счет çинче туса хунă нумай хваттерлĕ çуртри пӳлĕмсен хуçисен нумай хваттерлĕ çуртсенчи пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсас енĕпе республика программине туса хатĕрлеме, унта улшăнусем кĕртме кирлĕ сведенисене тăратмалли йĕрке**";

ă) $1–2^1$-мĕш пайсене çакăн пек çырса хурас:

"1. Республика программине (республика программине кĕртекен улшăнусене) туса хатĕрлес тата çирĕплетес ĕç çак тапхăрсенчен йĕркеленет:

республика программин проектне (республика программине кĕртекен улшăнусен проектне) туса хатĕрлени;

республика программине (республика программине кĕртекен улшăнусене) Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çирĕплетни.

2. Республика программин проектне (республика программине кĕртекен улшăнусен проектне) пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх енĕпе патшалăх политикине пурнăçлакан Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ (малалла – патшалăх заказчикĕ) нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне патшалăх мониторинг тунин результачĕсене, нумай хваттерлĕ çуртăн Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕн 167 статйин 1-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне тишкерсе тухнин результачĕсене (малалла çавăн пекех – нумай хваттерлĕ çуртăн техника тĕлĕшĕнчи тăрăмĕн тишкерĕвĕ) шута илсе туса хатĕрлет, енчен те çавнашкал тишкерĕве туса ирттернĕ пулсан.

2^1. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем республика программине туса хатĕрлеме, унта улшăнусем кĕртме кирлĕ сведенисене патшалăхăн çурт-йĕр асăрхавĕ енĕпе ĕçлекен органне кашни çулах утă уйăхĕн 1-мĕшĕчченхи вăхăтра асăннă орган çирĕплетнĕ формăпа тăратаççĕ.";

б) çакăн пек çырса 2^2-мĕш пай хушса хурас:

"2^2. Тĕп юсав фондне ятарлă счет çинче туса хунă нумай хваттерлĕ çуртри пӳлĕмсен хуçисем республика программине туса хатĕрлеме, унта улшăнусем кĕртме кирлĕ сведенисене вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çак статьян 2^1-мĕш пайĕпе палăртса хăварнă сведенисене хатĕрлесе çитерме кашни çулах çĕртме уйăхĕн 20-мĕшĕчченхи вăхăтра патшалăхăн çурт-йĕр асăрхавĕн органĕ çирĕплетнĕ формăпа тăратаççĕ.";

в) 3-мĕш пайра "республика программин проектне" сăмахсене "республика программин проектне (республика программине кĕртекен улшăнусен проектне)" сăмахсемпе улăштарас;

г) 5-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"5. Республика программине çулталăкра пĕрререн кая мар улшăнусем кĕртеççĕ.";

д) 6-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзацра "ăна çĕнетнĕ чухне" сăмахсене кăларса пăрахас;

4-мĕш пунктра "подряд организацине" сăмахсене "инженери тĕпчевĕсем, архитектурăпа строительство проекчĕсем, капиталлă строительство объекчĕсем тăвас, юсаса çĕнетес, тĕпрен юсас енĕпе ĕçлекен хăйне хăй йĕркелесе тăракан организацисен членĕсем шутланакан уйрăм предпринимателе е юридически сăпата, Раççей Федерацийĕн Хула строительствин кодексĕн 52-мĕш статйин 2^2-мĕш пайĕн 1-мĕш пунктĕнче кăтартнă нумай хваттерлĕ çуртри пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсас ĕçсене строительство подрячĕн килĕшĕвне тĕпе хурса пурнăçлакан çынсемсĕр пуçне (малалла – подряд организацийĕсем)," сăмахсемпе улăштарас;

çакăн пек çырса 6-мĕш пункт хушса хурас:

"6) нумай хваттерлĕ çуртăн техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне тишкерсе тухнин кăтартăвĕсем тăрăх çапла палăртнă: республика программипе пăхса хăварнă нумай хваттерлĕ çуртри пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсассипе çыхăннă пулăшу ĕçĕсене тата (е) ĕçсене палăртса хунă вăхăтра тума кирлĕ мар.";

е) çакăн пек çырса 7-мĕш пай хушса хурас:

"7. Республика программине пурнăçламалли кĕске вăхăтлăх плансене туса хатĕрлемелли тата çирĕплетмелли йĕркене, çавăн пек плансем тĕлĕшпе палăртакан требованисене вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тата тĕп юсав фондне ятарлă счет çинче туса хунă нумай хваттерлĕ çуртри пӳлĕмсен хуçисен çавăн пек плансене туса хатĕрлеме, унта улшăнусем кĕртме кирлĕ сведенисене тăратмалли йĕркене Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн нормативлă право акчĕпе палăртаççĕ.";

4) 11 статьяра:

а) 1-мĕш пайăн 2-мĕш пунктĕнче "республика программине çирĕплетнĕ е çĕнетнĕ кун тĕлне" сăмахсене кăларса пăрахас, "ăна çĕнетнĕ кун тĕлне" сăмахсене "унта улшăнусем кĕртнĕ чухне" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 3-мĕш пайра "тытса тăракан" сăмахсене "тытса тăрас ĕç-хĕле пурнăçлакан" сăмахсемпе улăштарас;

5) 12 статьяра:

а) 2-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"2. Нумай хваттерлĕ çуртсенчи пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсас ĕçе туса ирттермелли черете республика программинче нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне тишкерсе тухнин результачĕсене шута илсе, енчен те çавăн пек тишкерсе тухнине туса ирттернĕ пулсан, çавăн пекех çак виçесене шута илсе палăртаççĕ:";

ă) 4-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"4. Нумай хваттерлĕ çуртри пӳлĕмсен хуçисене тата нумай хваттерлĕ çуртсене тытса тăрас ĕç-хĕле пурнăçлакан организацисене нумай хваттерлĕ çуртсен тăрăмне хакламалли критерисем çинчен (вĕсене тĕпе хурса тĕп юсав ĕçĕсене туса ирттермелли черете палăртаççĕ), çавăн пекех нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне тишкерсе тухнин результачĕсем çинчен пĕлтермелли йĕркене, енчен те çавнашкал нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвне тишкерсе тухас ĕçе Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕн 167 стайин 2-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн туса ирттернĕ пулсан, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.";

6) 13 статьяна çакăн пек çырса хурас:

"13 статья. **Республика программине кĕртнĕ нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне хакласси**

1. Республика программине кĕртнĕ нумай хваттерлĕ çуртăн техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне тишкерсе тухас ĕçе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн право актне тĕпе хурса Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе туса ирттерме пултараççĕ, енчен те асăннă тишкерĕве туса ирттермелли тивĕçлĕ укçа-тенкĕне Чăваш Республикин черетлĕ финанс çулĕнчи тата планпа пăхнă тапхăрти Чăваш Республикин республика бюджечĕ çинчен калакан саккунĕпе пăхса хăварнă пулсан.

2. Республика программине кĕртнĕ нумай хваттерлĕ çуртăн техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне тишкерсе тухас ĕçе, нумай хваттерлĕ çуртри пӳлĕмсен хуçисен пĕрлехи пухăвĕнче Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕн 44 статйин 2-мĕш пайĕн 1^3-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн тунă йышăнăвне тĕпе хурса, çавнашкал нумай хваттерлĕ çуртри пӳлĕмсен хуçисен укçи-тенки шучĕпе туса ирттерме пултараççĕ. Кун пек чухне çавнашкал нумай хваттерлĕ çуртри пӳлĕмсен хуçисен пĕрлехи пухăвĕнче çирĕплетнĕ йышăнăва тĕпе хурса тунă республика программине кĕртнĕ нумай хваттерлĕ çуртăн техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне тишкерсе тухнин результачĕсене патшалăх заказчикне нумай хваттерлĕ çуртри пӳлĕмсен хуçисен пĕрлехи пухăвĕн асăннă йышăнăвĕпе палăртнă йĕркепе ярса параççĕ.

3. Республика программине кĕртнĕ нумай хваттерлĕ çуртăн техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне тишкерсе тухнин результачĕсем асăннă программăна улшăнусем кĕртмелли сăлтав шутланаççĕ.

4. Республика программине кĕртнĕ нумай хваттерлĕ çуртăн техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне тишкерсе тухас ĕçе инженери тĕпчевĕсем тăвакан сăпатсен членĕ пулни çинче йĕркеленнĕ хăйне хăй йĕркелесе тăракан организацисен членĕсем шутланакан е проект документчĕсем туса хатĕрлекен сăпатсен членĕ пулни çинче йĕркеленнĕ хăйне хăй йĕркелесе тăракан организацисен членĕсем шутланакан юридически сăпатсем Раççей Федерацийĕн техника енчен йĕркелесе тăрасси çинчен калакан саккунĕсемпе пăхса хăварнă йĕркепе туса ирттереççĕ.

5. Республика программине кĕртнĕ нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне тишкерсе тухас ĕçе туса ирттерессине йĕркелемелли йĕркене, çавăн пекех республика программине кĕртнĕ нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне тишкерсе тухнин результачĕсене шута илмелли йĕркене, çавнашкал программăна туса хатĕрленĕ тата çирĕплетнĕ чухне е унта улшăнусем кĕртнĕ чухне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн нормативлă право акчĕпе палăртаççĕ.

6. Нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне эксплуатаци тĕрĕслевĕ тумалли йĕркене Раççей Федерацийĕн техника енчен йĕркелесе тăрасси çинчен калакан саккунĕсемпе тата Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн нормативлă право акчĕпе палăртаççĕ.

7. Нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне патшалăх мониторинг туса ирттермелли йĕркене (патшалăхăн çурт-йĕр асăрхавĕн органĕ нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи тăрăмĕ çинчен тата çав тăрăм мĕнлерех улшăнса пыни çинчен калакан информацие унăн шайĕнче пухса пырать, систематизацилет, тишкерет) Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн нормативлă право акчĕпе палăртаççĕ. Нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи тăрăмĕн патшалăх мониторингне туса ирттермелли асăннă йĕрке шутне нумай хваттерлĕ çуртсен техника тĕлĕшĕнчи тăрăмĕн çак статьян 5-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă тишкерĕвне йĕркелесе ирттермелли йĕрке кĕме пултарать.";

7) 14 статьян 2^2-мĕш пайĕнче "йышăну" сăмаха "нормативлă право акчĕ" сăмахсемпе улăштарас;

8) 17 статьян 2-мĕш пайĕн 3-мĕш пунктне "подряд организацийĕсен," сăмахсем умĕн "Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕн 166 статйин 7-мĕш пайĕнче кăтартнă" сăмахсем хушса хурас;

9) 18 статьян 3-мĕш пайĕн виççĕмĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕн 166 статйин 7-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă строительство подрячĕн килĕшĕвĕн копине;";

10) 19 статьяра:

а) 1-мĕш пайра "85" цифрăсене "95" цифрăсемпе улăштарас;

ă) 2-мĕш пайăн иккĕмĕш абзацĕнче "тĕпрен юсас ĕç енĕпе пулăшу ĕçĕсем кӳрекен (ĕçсем пурнăçлакан) организаципе" сăмахсене "подряд организацийĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

11) 22^1 статьяра:

а) 1-мĕш пая ", Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕн 189 статйин 6-мĕш пайĕпе, çак статьян 2-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне" сăмахсем хушса хурас;

ă) 2-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"2. Нумай хваттерлĕ çуртри пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсас ĕçе çавнашкал нумай хваттерлĕ çуртăн техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне авари, çут çанталăк

е техноген сăлтавĕпе пулакан ытти майсăр лару-тăру сиенĕсене пĕтерме кирлĕ калăпăшпа йĕркене кĕртес тĕллевпе туса ирттернĕ чухне нумай хваттерлĕ çуртри пĕтĕмĕшле пурлăха тĕпрен юсасси çинчен калакан йышăнăва Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн нормативлă право акчĕпе палăртнă йĕркепе нумай хваттерлĕ çуртри пӳлĕмсен хуçисен пĕрлехи пухăвне ирттермесĕрех йышăнаççĕ. Нумай хваттерлĕ çуртăн техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне авари, çут çанталăк е техноген сăлтавĕпе пулакан ытти майсăр лару-тăру сиенĕсене пĕтерме кирлĕ калăпăшпа йĕркене кĕртнĕ чухне çав нумай хваттерлĕ çуртри пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсас ĕçе авари, çут çанталăк е техноген сăлтавĕпе пулакан ытти майсăр лару-тăру сиенĕсене пĕтерме кирлĕ калăпăшпа кăна, нумай хваттерлĕ çурта республика программине кĕске вăхăтра пурнăçламалли плана кĕртмесĕр, Раççей Федерацийĕн Çурт-йĕр кодексĕн 185 статйипе тата çак Саккунăн 19 статйипе регионти оператор ĕçĕхĕлĕн финанс çирĕплĕхне тивĕçтермелли укçа-тенкĕ евĕр палăртнă регионти оператор укçи-тенки шучĕпе туса ирттереççĕ тата ăна республика программине çулсерен улшăнусем кĕртнĕ чухне шута илеççĕ.".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хулли
2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕ
52 №